Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

12 (7756) № * Шăмат кун, 2010 çулхи февралĕн (нарăс) 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Район кунĕ



## Ĕçре пала́рчĕ

*Тури Панклире пурăнакан Зоя Степановна Андреева (сăн ӳкерчĕкре) 4 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă хушăра 20 çул «Ударник» хуçалăхăн Панклири сĕт ферминче дояркăра ĕçленĕ. Чунĕпе парăннă ĕçе паян та хаваспах пурнăçлать вăл. Иртнĕ çул хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 6011 килограмм сĕт сунине мухтанмалли кăтартăвах темест вăл. «Унчченхи пĕр çул ытларах та сунăччĕ. Апла пулсан пĕлтĕр темĕн туса çитерейменĕмĕр», – терĕ малашлăха пăхса ĕçлекен доярка.*

*Пирĕн хушăмăрта иртнине тĕрĕс хак парса малашлăха пăхакан ĕçченсем пурри район тĕрĕс çулпа аталаннине кăтартать.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ**

**2010 çулхи февралĕн 18-мĕшĕ 83№**

### Муркаш районĕнчи предприятисем, организацисем тата учрежденисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн 2009 çулхи итогĕсем çинчен

Экономика ăмăртăвĕ çинчен калакан положенипе (ăна Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи 109 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ) тата районти предприятисем, организацисем тата учрежденисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетекен комиссин 2010 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн **çапла йышăнатăп:**

**I. Муркаш районĕнчи предприятисем, организацисем тата учрежденисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 2009 çулхи итогсемпе çĕнтернĕ тесе йышăнас:**

**1.Ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче:**

1 вырăн – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерла общество,

2 вырăн – «Оринино» ЯХПК,

3 вырăн – Суворов яч. хис. ЯХПК тата ОПХ «Ударник» ГУП.

«ДаАн» чикĕллĕ яваплăхлă общество лайăх ĕçленине палăртас.

**2.Промышленность тата пулăшу паракан предприятисем хушшинче:**

1 вырăн – Муркаш райповĕ,

2 вырăн – Мăн Сĕнтĕр райповĕ,

3 вырăн – «Чувашсетьгаз» уçă акционерла обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ.

«Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество лайăх ĕçленине палăртас.

**3.Ял тăрăхĕсем хушшинче:**

1 вырăн – Йӳçкасси ял тăрăхĕ,

2 вырăн – Катькас ял тăрăхĕ,

3 вырăн – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Ильинка ял тăрăхĕ лайăх ĕçленине палăртас.

**II. Призлă вырăн йышăннă предприятисене, организацисене тата учрежденисене дипломсемпе наградăлас тата укçан премии парса хавхалантарас:**

1 вырăншăн – 1 степеньлĕ диплом, 12000 тенкĕ,

2 вырăншăн – 2 степеньлĕ диплом, 8000 тенкĕ,

3 вырăншăн – 3 степеньлĕ диплом, 5000 тенкĕ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ:
# «Малалла та пĕр тĕллевпех ĕçлесчĕ»

**Муркаш районĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!**

Паян эпир, йăлана кĕнĕ тăрăх, районăн иртнĕ çулхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне пĕтĕмлететпĕр. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Указĕпе килĕшӳллĕн 2009 çул Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулчĕ.

Пĕтĕмпе ял хуçалăх продукцине 1 млрд. та 645,0 млн. тенкĕлĕх туса илтĕмĕр: çакăн 38 процентне ял хуçалăх предприятийĕсем туса илчĕç, тепĕр 62 процентне – килти хушма хуçалăхсем.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче 2008 çулхинчен 15 процент – 5 пин тонна ытларах – пурĕ 35 пин тонна тырă туса илтĕмĕр. Тухăç 24,4 центнерпа танлашрĕ.

Çĕр улмие те, пур категориллĕ хуçалăхсене шутласа, 2008 çулхинчен 3,9 процент ытларах – 58,3 пин тонна туса илме пултартăмăр. Кашни гектартан вăтамран 163,6 центнер тухрĕ вăл.

Юлашки çулсенче районта пушă выртакан ял хуçалăх çĕрĕсемпе ытларах усă курма пуçларăмăр. 2009 çулта кăна çакнашкал 1592 гектар çĕре ĕçе кĕртрĕмĕр.

Туса илнĕ ял хуçалăх продукчĕсенчен 69 процентĕ – выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ. Сĕте, пур категориллĕ хуçалăхсене шутласа, виçĕм çулхинчен 2,5 процент ытларах туса илтĕмĕр. Шел пулин те, аш туса илесси пĕлтĕр 2008 çулхинчен 1,1 процент чухлĕ чакрĕ. Ку вăл пур категориллĕ хуçалăхсемпе шутласан. Ял хуçалăх предприятийĕсенче вара вăл 30 процент чакрĕ. Кунта, паллах, выльăхсен йышĕ чакса кайни япăх витĕм кӳчĕ.

Пирĕн выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи ĕçе тĕпренех улăштармалла. Выльăхсене тытассинче тата тăрантарассинче çĕнĕ технологипе усă курмалла. Çапла майпа выльăхсен йышне те, выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессине те ӳстермелле. Ку енĕпе ытти регионсен опычĕпе паллашни те ытлашши мар. Шăпах ытти регионсен опытне тĕпчесе, вĕсен опычĕпе усă курнипе ĕнтĕ Суворов яч. хис. (ертӳçи – Владимир Славич Андреев), «Оринино» (ертӳçи – Юрий Николаевич Шишокин), «Герой» (Ростислав Николаевич Тимофеев), «Ударник» (Платон Павлович Давыдов) хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессинче ырă утăмсем турĕç.

Çулсеренех Николай Григорьевич Ванеркин ертсе пыракан «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерла уçă общество çăмарта туса илессине ӳстерсех пырать. 2009 çулта кунта виçĕм çулхинчен 15 процент ытларах – 57 млн. штук, кашни чăхран 331 штук çăмарта илнĕ.

Ял хуçалăх продукцине туса илессипе тата вырнаçтарассипе ăнăçлă ĕçлекен ял хуçалăх предприятийĕсене патшалăх та палăрмаллах пулăшать. Иртнĕ çул хуçалăхсене çак тĕллевпе федераллă тата республика бюджечĕсенчен виçĕм çулхинчен 14,5 млн. тенкĕ ытларах – пурĕ 93,2 млн. тенкĕлĕх субсиди парса пулăшнă.

Килти хушма хуçалăхсене аталантарма 310 çемье 46 млн. та 405 пин тенкĕлĕх çăмăллатнă кредитсем илнĕ. Манăн килти хушма хуçалăха аталантарса пыракан, туса илнĕ продукцине йĕркеллĕ вырнаçтарса пыракан Галина Николаевна Александрована (Шетмĕпуç ял тăрăхĕ), çавăн пекех Катькас ял тăрăхĕнчи Михаил Алексеевич Каликов хресчен (фермер) хуçалăхне уйрăмах ырăпа асăнса хăварас килет.

Районта çĕр лаптăкĕсене арендăна тата харпăрлăха парас ĕç те пырать. Иртнĕ çул 42 çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе аукцион ирттернĕ. Çĕре арендăна парассипе юридически лицосемпе 31 килĕшӳ тунă. 343 çын çĕр лаптăкĕсене нумай вăхăтлăха арендăна пама ыйтса заявлени панă пулсан, вĕсенчен 298-шĕпе ку енĕпе килĕшӳ тунă. Çавăн пекех аренда килĕшĕвĕ çумне тепĕр хушма килĕшӳ тунă.

Иртнĕ çул районти промышленность предприятийĕсене те çăмăл пулмарĕ. Промышленность продукцине виçĕм çул туса илнин 56,9 процентĕ чухлĕ çеç туса илнĕ – пурĕ 661,3 млн. тенкĕлĕх.

Йывăрлăхсене пăхмасăр, потребительсен рынокĕ малтанхи çулсенче çитнĕ чикĕсенчен каялла чакмасть. Халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтерессин пахалăхне лайăхлатассипе татăклă утăмсем тăваççĕ. Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 2009 çулта пĕтĕмпе 586,0 миллион тенкĕлĕх пулнă е 2008 çулхинчен 1 процент ытларах. Çак суммăн 78 процентне (461 млн. тенкĕлĕх) Борис Васильевич Андреев тата Людмила Петровна Майкова ертсе пыракан Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен предприятийĕсем тунă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Февралĕн 23-мĕшĕ – Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ

**РАÇÇЕЙ ÇАРĔПЕ ФЛОЧĔН ХИСЕПЛĔ ВОИНĔСЕМ, ЗАПАСРИ РЯДОВОЙСЕМПЕ ОФИЦЕРСЕМ, АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ТАТА ХĔÇ-ПĂШАЛЛĂ ВĂЙСЕН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Хăпартланупа мухтавăн, паттăрлăхпа çирĕплĕхĕн çак пĕтĕм халăх уявĕ пысăк миссие пурнăçлассине – хăйсен пурнăçне Тăван çĕршыв интересĕсене хӳтĕлес, тăван халăхшăн тăрăшас, çынсен пурнăçне сыхлас ĕçе панисене пĕтĕçтерет.

Ĕмĕртен ĕмĕре Раççей салтакĕсен паттăрлăхĕ, хăюлăхĕ, патриотизмĕ тăнăç пурнăçпа йĕркелĕхе сыхласа хăварассипе çирĕп никĕс пулса тăнă. Çавна палăртма кăмăллă: паянхи çамрăксем хăйсен ашшĕсемпе аслашшĕсен мухтавлă традицийĕсене малалла чыслă тăсаççĕ, хăйсен çар тивĕçне пысăк ответлăхпа пурнăçлаççĕ, патшалăхăн оборонипе хăрушсăрлăхне ӳстереççĕ, çар ĕçĕн ăсталăхне ӳстерсе пыраççĕ.

2010 çулта Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул тултарать. Çĕршыв ирĕклĕхне сыхласа хăварнă мухтавлă ăру паттăрлăхĕ пирĕншĕн яланах хăйсен пурнăçне пама хатĕррин, кăмăл-туйăм çирĕплĕхĕн тата тăван çĕре чунтан юратнин чĕрĕ тĕслĕхĕ пулса тăрать.

Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисене пурне те çирĕп сывлăх, çĕр тивĕçне пурнăçланă çĕрте тата мирлĕ ĕçре ăнăçусем, тăнăçлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ! АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ВĂРÇĂН ЙЫВĂР СУЛĔСЕНЕ ЧĂТСА ИРТТЕРНĔ ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, МИРЛĔ ВĂХĂТРАХ ÇАПĂÇУСЕНЕ ХУТШĂННĂ САЛТАКСЕМ, ÇАРА КАЙМА ХАТĔРЛЕНЕКЕН ÇАМРĂКСЕМПЕ ВĔСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Сире пурне те çывхарса килекен Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв вăл Тăван çĕршыва юратакансен, унăн мирлĕ пурнăçĕпе лăпкăлăхне сыхлакансен, паттăрлăхпа хăюлăх уявĕ. Çĕршыва хӳтĕлесси – пирĕн çĕршыври кашни çыншăн чыслă та хисеплĕ тивĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунă ветерансемпе тыл ĕçченĕсен умĕнче эпир ĕмĕрĕпех парăмра. Вĕсем çитĕнекен ăрăва патриотизмла воспитани парас ĕçе хутшăнаççĕ, çамрăксем вĕсенчен тĕслĕх илсе ӳсеççĕ. Кăçал Аслă Отечественнăй вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май, вĕсен паттăрлăхне çитĕнекен ăру патне çитерессишĕн татах тăрăшмалла пирĕн. Паянхи çамрăксем аслă ăру çыннисен ĕçне малалла тăснине, Тăван çĕршывăмăр паян та шанчăклă алăра пулнине çар конфликчĕсене хутшăннисен паттăрлăхĕ те çирĕплетсе парать. Афган вăрçинче те, ытти вĕри точкăсенче те пирĕн салтаксем çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. Çĕршыв хушсан, нимрен шикленмесĕр паянхи салтаксем те паттăрлăх çулĕ çине тăнине кăтартса пачĕç. Паттăр ывăлсем çитĕнтернĕ салтак амăшĕсен умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Çĕршыв тĕрекĕ, унăн пуласлăхĕ пирĕнтен кашнинченех килет. Хамăрăн тăрăшуллă ĕçпе район, республика, Раççей çирĕплĕхĕшĕн тимлемелле, пĕрле пĕр тĕллевпе вăй хумалла пирĕн. Кăçал Учительсен çулталăкĕ пулнă май, пирĕн ачасем пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пултарччăр тесе тата та хытă тимлемелле. Аслă ăрури паттăр салтаксен ырă тĕслĕхĕ çинче воспитани парассине тĕпе хумалла. Çамрăксене Тăван çĕршывăн пуласлăхĕ, çирĕплĕхĕ вĕсенчен кашнинчен килнине мĕн пĕчĕкрен ăша хывса ӳстермелле.

Пурне те сире çирĕп сывлăх сунатăп. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Çемьере килĕшӳпе юрату, тату пурнăç хуçаланччăр.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район пуçлăхĕ.**

## Ĕçлекенсене пĕлме

# Тăватă кун канатпăр

Февралĕн 23-мĕшĕ – Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ. Вăл кану кунĕ шутланать, ытлари куна килет.

Февралĕн 27-мĕшĕнчи (шăмат) кану кунне февралĕн 22-мĕшне – тунти кун – куçараççĕ.

Çапла вара февралĕн 20, 21, 22, 23-мĕшĕсенче умлă хыçлă тăватă кун канмалла пулать.

## Саламлатпăр



Юратнă, хисеплĕ ĕçтешĕмĕре, Муркашри тĕп больницăра ĕçлекен **Екатерина Трофимовна МЕДОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: пĕрле ĕçлекенсем.**

Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене, Афган çĕрĕ çинче тата Чечен Республикинче пулса иртнĕ вăрçăсене хутшăннă хисеплĕ ентешсене çывхарса килекен Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕпе саламлатпăр. Эсир çамрăк ăрушăн витĕмлĕ те хисеплĕ çынсем. Сирĕн умăрта пуçа тайса пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал тата мирлĕ пурнăç сунатпăр.

**Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем тата ĕçлекенсем.**